Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчenпе тухать

98 (7840) № * Юн кун, 2010 ҫулхи чӳк (ноябрь) уйӑхӗн 24-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

## Ыттисемшӗн тӗслӗх вырӑнне

Ӗҫре пултаруллисем



*Мӑн Сӗнтӗрти «Сундырь-Хлеб» чикӗллӗ яваплӑхлӑ общество тӗнчери экономика кризисӗн тапхӑрӗнче те арканса-саланса кайманни, производствӑна чакарса яманни – малашлӑха пӑхса ӗҫлесе пынинче, потребительсен ыйтӑвӗсене мала хунинче, продукци ассортиментне ӳстерсе пынинче.*

*Эсир сӑн ӳкерчӗкре куракан Ольга Петровна Крючкова вара кунта макарон тунӑ ҫӗрте вӑй хурать. Пӗрремӗш ҫул мар ӗнтӗ, ҫирӗм ҫула яхӑн тӑрӑшать вӑл предприятире. Ҫавна май ӑсталӑхӗ те пӗчӗк мар. Производство заданийӗсене йӗркеллӗ пурнӑҫланипе пӗрлех пахалӑх ыйтӑвӗ пирки те манмасть вӑл.*

**В. ШАПОШНИКОВ**
**сӑн ӳкерчӗкӗ.**

## Иккӗмӗш тапхӑр пуҫланчӗ

Пенси ыйтӑвӗсемпе

***Граждансен пенси счечӗсем пирки пӗлтернисене ярса памалли иккӗмӗш тапхӑр пуҫланчӗ. Ҫавна май кун пирки РФ Пенси фончӗн районти управленийӗн пай пуҫлӑхне Ольга Николаевна АЛЕКСЕЕВӐНА каласа пама ыйтрӑм.***

– Пенси фончӗн заказлӑ ҫырӑвӗсене Чӑваш Енри пенсин пухӑнакан пайне хатӗрлекен 93 пин ҫынна яхӑн илет. Пирӗн районпа ку хисеп 3 пине яхӑн ҫынпа танлашать.

Ҫырура ӗҫ пенсийӗн страхланӑ пайне 2009 ҫулшӑн тата унчченхи ҫулсемшӗн финанслама Пенси фондне куҫнӑ страховани взносӗсем пирки, кунпа пӗрлех гражданиншӑн 2009 ҫулшӑн страховани взносӗ тӳленӗ пур ӗҫ паракансем пирки пӗлтернисем те пур.

Пӗлтернисем информаци пӗлтерӗшлӗ. Ҫыру илнӗ май ӗҫлекен ҫын ӗҫ паракан взноссем мӗн чухлӗ куҫарса панине тӗрӗслеме пултарать. Пенсионерсем вара кӑҫалхи август уйӑхӗнче хайсен пенсийӗсене ҫӗнӗрен шутласа панӑ чухне 2009 ҫулшӑн страховани взносӗсем мӗн чухлӗ хывнине пӗлме пултараҫҫӗ.

Пӗрремӗш тапхӑр 2010 ҫулхи августӑн 31-мӗшӗнче вӗҫленнӗччӗ. Пӗлтернисене пенсин пухӑнакан пайӗ пур граждансене ярса панӑ. Кӑҫал вара пенсин страхланӑ тата пухӑнакан пайӗсем ҫине куҫнӑ страховани взносӗсем, суйласа илнӗ ертсе пыракан компанин ӗҫ тухӑҫлӑхӗ пирки пӗлтернисемсӗр пуҫне ҫырура пенсисене патшалӑх финанслассин программипе килӗшӳллӗн хывнӑ взноссем пирки пӗлтернисем те пур.

Патшалӑх финанслассин программи обязательнӑй пенси страхованийӗн шайӗнче пенсин пухӑнакан пайӗ ҫук граждансене те хӑйсем тӗллӗн пенсин пухӑнакан пайне йӗркелеме майсем туса парать. Программӑна кӗнӗ май граждансем хывнӑ взноссем, патшалӑх тата ӗҫ паракан финанслании кӑтартӑвӗсене те ҫырусенче палӑртаҫҫӗ.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**калаҫнӑ.**

## Уҫҫӑнлӑх малти вырӑна тухать

Суд

***Малашне правосуди уҫҫӑнлӑхӗ кашниншӗнех меллӗ пулса тӑма тивӗҫлӗ. Граждансен суд ӗҫӗн правилисемпе кӑна мар, йышӑнакан суд акчӗсен содержанийӗпе те, ӗҫсене пӑхса тухасси епле пынипе те паллашма май пур.***

2010 ҫулхи июлӗн 1-мӗшӗнчен тытӑнса «Интернет» сечӗн Раҫҫей Федерацийӗн патшалӑх автоматизаци системин «Правосудие» интернет-порталӗнче пур судсен официаллӑ сайчӗсенче суд акчӗсен тексчӗсене вырнаҫтараҫҫӗ. Кун пирки 2008 ҫулхи декабрӗн 22-мӗшӗнче йышӑннӑ 262-ФЗ № «Об обеспечении доступа к информации о деятельности судов общей юрисдикции в Российской Федерации» Федераллӑ саккунра каланӑ.

Суд акчӗсем вӗсем – гражданла, уголовнӑй тата административлӑ ӗҫсене пӑхса тухнӑ чухне суд компетенцийӗпе йышӑннӑ приговорсем, определенисем, постановленисем, йышӑнусем. Интернет-сайтра ку е вӑл ӗҫ тӗлӗшпе саккунлӑ вӑя кӗнӗ суд акчӗсене, вӗсенчи уйрӑм сыпӑксене вырнаҫтаратпӑр. Пичетличчен кашни суд актне компьютер тӗлӗшӗнчен тӗплӗн тишкерсе хак паратпӑр. Кунта ҫак мелсене палӑртса хӑварни вырӑнлӑ:

– суйласа илесси. Суд приговорӗсен, определенийӗсен, постановленийӗсен тата йышӑнӑвӗсен пӗтӗмӗшле тексчӗсенчен пурте пӗлмелли мар информацие (патшалӑх, коммерци тата профессии вӑрттӑнлӑхӗ, харпӑр хӑйӗнпе ҫыхӑннӑ информаци) кӑтартмалла марри;

– деперсонификаци е текстран суд процесӗн участникӗсен харпӑр хӑй даннӑйӗсене кӑларса пӑрахни;

– автоматика мелӗпе Раҫҫей Федерацийӗн «Правосудие» патшалӑх автоматизаци системин режимӗпе усӑ курса информацие вырнаҫтарасси.

Ӗҫсем епле иртсе пынин информацийӗ пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Ку е вӑл ӗҫ пирки, суд ларӑвӗсем хӑш кун тата хӑш вӑхӑтра пулни, суд ларӑвне хутшӑнакан енсем, суд ларӑвӗ ӑҫта иртесси, ӗҫе пӑхса тухакан судья пирки пӗтӗмпех пӗлме пулать.

Муркаш район судӗнче 2010 ҫулта пӑхса тухнӑ ӗҫсем тӗлӗшпе йышӑннӑ суд акчӗсен тексчӗсемпе «Судебные акты» пайра, ӗҫсем епле пыни пирки «Судебное делопроизводство» пайра пӗлме пулать. Ҫавна валли Муркаш район сучӗн официаллӑ интернет-сайтне кӗмелле ҫеҫ. Адрес.: http:// morgaushsky.chv.sudrf.ru.

Хушма информаци илес тесен специалистсем патне 62-0-72 е 62-0-73 телефонсемпе шӑнкӑравламалла.

**В. ИВАНОВ,**
**Муркаш район сучӗн администраторӗ.**

Район администрацийӗнче

## Шкула – Хисеп грамоти

Район администрацийӗн пуҫлӑхӗн тивӗҫӗсене пурнӑҫлаканӗн ноябрӗн 17-мӗшӗнчи 892 № йышӑнӑвӗпе районти вӗрентӗве аталантарассине пысӑк тӳпе хывнӑшӑн тата шкула никӗсленӗренпе 125 ҫул ҫитнӗ ятпа **«Нискассинчи пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вӑтам шкул» муниципаллӑ вӗренӳ учрежденине** район администрацийӗн Хисеп грамотипе наградӑланӑ.

Право ыйтӑвӗсемпе

## Тӗл пулу иртрӗ

Чӳк уйӑхӗн 18-мӗшӗнче Муркашри ял тӑрӑхӗсем хушшинчи тӗп библиотекӑра вырнаҫнӑ «Раҫҫей юрисчӗсен ассоциацийӗ» Чӑваш регион уйрӑмӗн консультаци пунктӗнче пӗрлехи тематикӑлла йышӑну иртрӗ. Кун йӗркинче предпринимательство ӗҫ-хӗлне пурнӑҫлакан субъектсен прависене хӳтӗлесси пулчӗ.

Тӗл пулӑва Муркашри ял тӑрӑхӗсен хушшинчи тӗп библиотека директорӗ Т. Королькова уҫрӗ, кун йӗркине кӗртнӗ ыйтусемпе камсем тухса каласассине пӗлтерчӗ. Палӑртмалла, тӗл пулӑва уйрӑм предпринимательсемпе пӗрлех ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсем те хутшӑнчӗҫ.

Малтанах пухӑннисем умӗнче район прокурорӗн пулӑшаканӗ Александр Тихонов тухса каларӗ. Вӑлах предпринимательство ӗҫ-хӗлне тытса пыракансемпе тӗрлӗ тӗрӗслевсем вӑхӑтӗнче сиксе тухакан ыйтуллӑ лару-тӑру пирки ӑнлантарчӗ.

– Ҫӗр-шывра ӗҫсӗрлӗхпе кӗрешес вӑхӑтра предпринимательство курӑмлӑ вырӑн йышӑнать. Ҫавӑнпа та ку ӗҫе явӑҫакансем тӗлӗшпе патшалӑх тӗрӗслевӗ (надзорӗ) ирттернӗ чух та, муниципаллӑ тӗрӗслевсенче те вӗсене саккунлӑ хӳтӗлесси мала тухать, – терӗ тӗл пулури ӗҫ йӗркипе паллаштарнӑ май Александр Николаевич.

Предпринимательсен хӑйсен ӗҫӗнче Раҫҫей саккунӗсене пӑхӑнмалли пирки, ҫавӑн чухне ҫеҫ тӗрӗслевсем вӑхӑтӗнче татса паман ыйтусем сиксе тухас марри ҫинчен тӗл пулура район прокурорӗн пулӑшаканӗ Г. Еремеева, районти патшалӑх пушар надзор уйрӑмӗн ертӳҫи И. Смирнов, Росреестр управленийӗн специалисчӗ В. Михайлова, Чӑваш Енри Роспотребнадзор Управленийӗн территори уйрӑмӗн тӗп специалист-экспертчӗ Г. Воробьева тӗплӗн каласа пачӗҫ. Вӗсемех предпринимательсен ыйтӑвӗсем ҫине хуравларӗҫ.

**А. БЕЛОВ.**

Саламлатпӑр



Хаклӑран та хаклӑ мӑшӑра, аттене, кукаҫие, тӑвана – Исетеркке ялӗнче пурӑнакан, ӗҫ ӗмӗрне тӑван хуҫалӑхра ирттернӗ **Александр Илларионович ИЛЛАРИОНОВА** 75 ҫул тултарнӑ ятпа чун-чӗререн саламлатпӑр. Юман пек ҫирӗп сывлӑх, вӑрӑм кунҫул, канлӗ ватлӑх сунатпӑр, малашне те сана пурнӑҫра Турри вӑй-хӑват парсах тӑтӑр. Мӗн ӗмӗтленни-шутлани пурнӑҫа кӗрсех пытӑр ялан, хуйхӑ-суйхӑ ан пытӑр сывӑха нихӑҫан. Анлӑ кӗрекӳ кил-йыша хапӑл тутӑр куллен.

**Саламлакансем: мӑшӑрӗ, хӗрӗсемпе кӗрӳшӗсем, мӑнукӗсем, тӑванӗсем.**

Юратнӑ мӑшӑра, ывӑлӑма, аттене, кукаҫие – Кашмаш ялӗнче пурӑнакан **Николай Витальевич АРХИПОВА** 50 ҫул тултарнӑ ятпа чӗререн тухакан чи ӑшӑ сӑмахсемпе саламлатпӑр.

Вӑрӑм та анлӑ пурнӑҫ ҫулӗпе утма ҫирӗп сывлӑхпа вӑйхӑват сунатпӑр. Хӑвна чи телейлӗ ҫын пулнине туйма санӑн ӗмӗтӳсем пурнӑҫланса пычӑр, тӑван-пӗлӗшсен ӑшши ан иксӗлтӗр. Эпир сана юрататпӑр.

**Пысӑк салампа: мӑшӑрӗ, амӑшӗ, ывӑлӗпе хӗрӗ, кӗрӳшӗпе мӑнукӗ.**

Пирӗн хисеплӗ ӗҫченӗмӗре, Муркашри типографире чылайранпа тӑрӑшнӑ **Зоя Николаевна МИРОВАЕВӐНА** ҫуралнӑранпа 70 ҫул тултарнӑ ятпа чун-чӗререн тата ӑшшӑн саламлатпӑр. Эпир сире ҫирӗп сывлӑх, иксӗлми телей, вӑрӑм кун-ҫул сунатпӑр. Сӗтелӗр ҫӑкӑр-тӑвартан, кӗрекӗр тӑван-пӗлӗшрен ан татӑлтӑр. Мӗн ӗмӗтленни пӗтӗмпех пурнӑҫлантӑр. Малашне те ырлӑх-сывлӑхлӑ пулма Турӑ вӑй-хӑват патӑр сире.

**Район хаҫачӗн редакци коллективӗ.**

Ҫырӑнтару

**Хаклӑ вулаканӑм!**
**Райхаҫата ҫӗнӗ ҫултан илсе тӑма ҫырӑнтарас тапхӑр малалла пырать. Ҫырӑнтару хакӗ унччченхиех – 191 тенкӗ 70 пус (ултӑ уйӑха).**

# Пахча çимĕç тимлĕх ыйтать

**Купăста фестивалĕнчен**



*Çеçмерти Александр Никитин хресчен (фермер) хуçалăхĕнче кăçал 4,5 гектар купăста лартса ÿстернĕ. Ăна пухса кĕртес ĕçре Людмилăпа Вячеслав Герасимовсем те тăрăшса ĕçлерĕç.*

Малашлăха шанчăклăн пăхакан пĕр ĕçпе кăна çырлахса ларманни, вăл тăтăшах шыравра пулни, хăйĕн ĕçĕнче çĕнĕлĕхсене çул парсах пыни пуриншĕн те паллă. Тĕрлĕ енлĕ ĕçлесен çеç йĕпе-сапара та, шăрăхра та çухатусем курăмлах пулмĕç. Çакна çĕр ĕçченĕ аван пĕлет. Çавăнпа та вăл пусă çаврăнăшне тыră-пулăсăр пуçне çĕр улми, выльăх-кăшманĕ, пахча çимĕç, курăк туса илессине кĕртет.

– Пĕр енлĕ ĕç иккĕленÿлĕх çуратать. Çавăнпа та хресченĕн ĕлĕкхи йăлапа тĕрлĕ культурăсем туса илесси çине тимлĕх уйăрмалла. Çакна иртнĕ шăрăх çу кунĕсем те çирĕплетсе пачĕç. Тĕрлĕ культурăпа ĕçлесси тата çĕр ĕç технологине çирĕп пăхăнасси хресченшĕн тĕп аталану çулĕ пулмалла, – терĕ Куславкка районĕнчи купăста фестивальне тухса кайма пуçтарăннă чух «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă общество ертÿçи В. Кондратьев.

Сăмах май, «ВаСем» общество кăçал тыră-пулă туса илнипе пĕрлех 90 гектар çĕр улми лартнăччĕ. Пахча çимĕçе те иккĕмĕш вырăна хăварман хуçалăхра. 5 гектар купăста, 1 гектар хĕрлĕ кăшман, 3 гектар кишĕр ăнса пулни ертÿçĕ сăмахне çирĕплетни кăна.

Кунта пĕрлешÿллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче тата килти хушма хуçалăхсенчи лару-тăрăва танлаштарни те хăйне евĕр ÿкерчĕк кăларса тăратать. Пĕрлешÿллĕ хуçалăхсем кăçал 17 гектар (12 гектар «Свобода» хуçалăхра) купăста, 9 гектар хĕрлĕ кăшман («ВаСемсĕр» пуçне 3 гектар – «Свободăра», 5 гектар – «Геяра»), 3 гектар кишĕр туса илнĕ. Çав вăхăтрах асăннă культурăсене хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 14; 5; 1 гектар туса илнĕ. Килти хушма хуçалăхсенчи кăтарту вара (çав йĕркепех) 275; 55; 106 гектарпа танлашать.

Купăста фестивальне пирĕн енчен район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп специалист-экспертчĕпе А. Павловпа районти «Россельхозцентр» филиалĕн ертÿçи В. Морозов, «Ударник» хуçалăх директорĕ П. Давыдовпа хуçалăх делегацийĕ, «ВаСем» чикĕллĕ яваплăх обществин руководителĕ В. Кондратьев хутшăнни Муркашсем те пахча çимĕç еннелле çаврăнасса шантарать.

Пахча çимĕçпе ĕçлекенсемпе агрномсем, хуçалăхсен ертÿçисем çак ĕç вăрттăнлăхĕпе паллаштарнă пресс-конференцие те хутшăнчĕç.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ÿкерчĕкĕ.**


КОМПАНИЯ "КОНСУЛЬТАНТ ПЛЮС"
и ФИРМА “ЭЛИС”
ПРЕДСТАВЛЯЕТ
КонсультантПлюс надежная правовая поддержка

НОВШЕСТВА ДЛЯ ЮРИСТОВ

Компания "Консультант Плюс" объявляет о выходе трех новшеств для юристов в справочной правовой системе КонсультантПлюс. Это **"Путеводитель по договорной работе"**, **консультации вопросы-ответы для юриста** и сводный информационный банк **"Суды общей юрисдикции"**. Новшества расширяют возможности пользователей-юристов: упрощают поиск информации, позволяют эффективнее и быстрее решать возникающие в работе задачи.

**"Путеводитель по договорной работе"** поможет составить оптимальный вариант договора с учетом интересов сторон и рисков каждой из них. На момент выхода в Путеводителе рассмотрены наиболее распространенные договоры: поставки, аренды, подряда, возмездного оказания услуг. В дальнейшем будут добавлены другие договоры. По каждому виду договоров представлено три документа: рекомендации по заключению договора (особенности условий для обеих сторон договора, формулировки условий); риски одной стороны договора; риски другой стороны договора. Все рекомендации и риски сформулированы с учетом положений законодательства и анализа судебной практики. Тексты содержат ссылки на правовые акты и постановления судов. Материалы "Путеводителя по договорной работе" будут ежемесячно актуализироваться.

**"Путеводитель по договорной работе"** продолжает развитие Путеводителей КонсультантПлюс. Эти аналитические продукты помогают решать самые разные профессиональные задачи, не тратя время на поиск и тщательный анализ информации. В них уже отобрана и представлена в компактном виде ключевая информация по вопросу, со ссылками на правовые акты и судебную практику.

Получить более подробную информацию о новом Путеводителе можно на специальном сайте putevoditel.consultant.ru, где представлены все Путеводители в системе КонсультантПлюс.

**Вопросы-ответы для юриста** - это подборка консультаций по сложным и спорным юридическим вопросам, которые часто возникают в текущей деятельности юристов, не имеют однозначного или очевидного решения. Материалы представлены в удобной форме "вопрос-ответ", помимо четкого лаконичного ответа в консультации дается его подробное обоснование со ссылками на нормативные акты и судебную практику. Консультации охватывают различные отрасли права: договорное, корпоративное право, а также гражданский и арбитражный процесс. Авторы консультаций - ведущие специалисты-практики консалтинговых компаний и эксперты компании "Консультант Плюс" с большим опытом практической работы.

Консультации включены в информационный банк "Юридическая пресса" системы КонсультантПлюс, ежемесячно будут добавляться новые материалы.

**“Суды общей юрисдикции"** - это сводный информационный банк, в который вошли решения судов общей юрисдикции разных субъектов РФ, включая Москву и Санкт-Петербург. На момент выпуска банк содержит более 40 000 решений судов по гражданским и административным делам с участием физических лиц, а также по уголовным делам об экономических преступлениях.

**Тематика документов различна:** *трудовые споры; дела о защите прав потребителей; дела о защите интеллектуальной собственности; земельные, жилищные, имущественные, налоговые, страховые, банковские споры; дела об административных правонарушениях в финансовой, экономической, природоохранной сферах; дела об оспаривании индивидуальных и нормативных правовых актов.*

До сих пор практика судов общей юрисдикции различных регионов была плохо представлена в общедоступных источниках. Благодаря сводному банку в системе КонсультантПлюс пользователи получили возможность оперативно получать информацию о решениях судов общей юрисдикции разных субъектов РФ. Информационный банк **"Суды общей юрисдикции"** будет обновляться еженедельно.

Все новшества интересны широкому кругу специалистов юридического профиля. Установка новинок у пользователей КонсультантПлюс начнется в ноябре 2010 года.

Более подробную информацию о новшествах для юристов можно получить по адресу:

КонсультантПлюс надежная правовая поддержка
**г. Чебоксары, ул. Нижегородская, д.4**
**или по телефонам: 8 (8352) 62-35-15, 62-10-83,**
**«горячая линия» 40-66-07, 40-66-08;**
фирма ЭЛИС


**Райадминистрацире**

## Хисеп грамотине тивĕçнĕ

***Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2010 çулхи октябрĕн 15-мĕшĕнчи 782 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăлана:***

- Орининти вăтам шкулти пуçламăш классене вĕрентекен **Надежда Рудольфовна ИВАНОВĂНА** çитĕнекен ăрăва вĕрентес тата воспитани парассинче тунă çитĕнÿсемшĕн тата нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн;

- Шатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан тĕп шкулти директорĕн вĕрентÿпе воспитани енĕпе ĕçлекен çумне **Нина Валериановна ОБРУЧНИКОВĂНА** çитĕнекен ăрăва вĕрентес тата воспитани парассинче тунă çитĕнÿсемшĕн тата нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн;

- Платкассинчи ял клубĕн администраторне **Светлана Николаевна МАТВЕЕВĂНА** нумай çул хушши тухăçлă ĕçленĕшĕн тата активлă обществăлла ĕçшĕн;

- Ванюшкин А.Н. хресчен (фермер) хуçалăхĕн ертÿçине **Александр Никандрович ВАНЮШКИНА** районăн ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тухăçлă ĕçленĕшĕн.

**Тăван ен çыннисем – çĕр-шыв патриочĕсем**

# Халăхшăн ĕçленĕшĕн, халăх ячĕпе




...Пĕри кайсан пукан пушанать, тепри кайсан вара ырă ят юлать. Каçарăр та, халăх сăмахлăхне хам малалла калассине тĕпе хурса çĕнетрĕм.

«Мĕн-ха вăл Тăван çĕр-шыв?» – ыйтаттăмăр ача чухне вĕрентекенĕмĕр куçĕнчен тинкерсе. Çулсем иртнĕçемĕн Тăван çĕр-шыв пĕлтерĕшĕ ÿссех, уçăмлансах пычĕ. Кашниншĕнех çапла-тăр вăл. Вăхăт çитсен салтак атти тăхăнни, Тăван çĕр-шыв сыхлавĕнче тăни, производствăра предприяти аталанăвĕшĕн çанă таврăрса ĕçлени патриотизм туйăмне ĕнерхи ачасен ăс-тăнĕнче вăйлатать кăна. Мĕн калăн-ха кунта Афганистанта интернационалла тивĕçе пурнăçланă, Чечен Республикинчи лару-тăрăва çирĕплетессишĕн вăрçă вутне кĕнĕ каччăсем пирки. Тăван çĕр-шыв вĕсенчен кашниншĕнех малти вырăнта пулнă-çке-ха...

Районти интернационалист салтаксем Катькас ял тăрăхĕнчи Çĕлеменкассинче çĕр-шывăн патриочĕ ячĕпе асăну хăми уçатпăр тесен чĕрене çĕкленÿллĕ туйăм хупăрласа илчĕ. Пур апла пулсан пирĕн хушăмăрта мирлĕ пурнăçра та паттăрла ĕç тăвакансем.

...Кĕске пурнăçне халăха халалланă Сергей Димитриевич Кошкин 1962 çулхи раштав уйăхĕн 22-мĕшĕнче çуралнă. Кăçалхи çĕртме уйăхĕн 18-мĕшĕнче вара пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнă.

– Тĕлĕнмелле çынччĕ Сергей Димитриевич. Нихăш ĕçе пурнăçлассине те ырана хăвармастчĕ. Çавăнпах хисеплеттĕмĕр эпир ăна. Калайкассинчи вăтам шкулта интернационалист салтаксен музейне уçассипе тата ăна тивĕçлĕ йĕркелессипе те пуçару туса нумай тимлерĕ вăл. Çакăншăн та, ялти çынсем хушшинче патриотизм туйăмне аталантарнăшăн та пысăк тав ăна, – терĕ вăл пурăннă пÿрт çинче асăну хăми уçма пуçтарăннă ял халăхĕ умĕнче интернационалист салтаксен районти канашĕн ертÿçи В.Е. Киршев.

Вячеслав Евсеевич сăмахĕнче тăван ен патриочĕн нумай ĕçĕ. «Ачасем курччăр, халăх ăнлантăр», – тесе кÿлĕнетчĕ ума лартнă ĕçе С. Кошкин. Çак тĕллевпе ĕçлесех Сергей Димитриевич хăй вăйĕпе никамран укçа ыйтмасăр «афганецсене» халалланă музей йĕркелесе яма, Москакассинче вĕсен ячĕпе палăк уçма, хăйсен ялĕнчен Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче пуç хунă ентешĕсене халалласа хăйĕн укçитенкипе палăк тума пултарнă.

– Паллах, кермен тума пулать те чуна тăваймастăн. Сергей Димитриевич вара ял çыннисен чунĕшĕн ытларах тăрăшрĕ. Кĕске ĕмĕртех нумай ĕç турĕ. Унăн ĕç палăкĕсем пулас ăру валли, – терĕ кирек хăш лару-тăрура та хăйне çын пек тытнă ентешĕмĕр пирки халăх ăсчахĕ Е. Ерагин.



*Патриот хăй вăйĕпе Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче пуç хунă ентешĕсене халалласа уçнă палăк.*

*Тавах сана, Сергей. Йывăр тăпру çăмăл пултăр.*



Кунта С. Кошкинпа пулса иртнĕ пĕр пулăм пирки каласа хăварни паян çара каяссинчен хăтăлса юлассишĕн çÿрекенсене ăнлантарулла пулĕ. Куç япăх курнипе салтака юрăхсăр тесен Сергей лăпланман, куç çинче операци тутарса 26 çулта çара каять. Унтан вара старшина званийĕпе таврăнать.

– Кĕске ĕмĕрĕ тăршшĕпех салтак пулчĕ вăл. Ялта та салтак тетчĕç ăна. Икĕ çул каялла хамăр ялтан Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине кайса фронтра пуç хунă ентешсене халалласа хăйĕн укçи-тенкипе палăк тума пуçласан та хирĕçлемерĕмĕр ăна. Уншăн кашни çулхи Çÿнтерÿ кунĕ пысăк уявччĕ. Ăна ял çыннисемпе çуллен пĕрле уявлама тăрăшатчĕ. Ял уявĕ тетчĕç çак куна Çĕлеменкассисем, – терĕ патриотăн мăшăрĕ Елена Леонидовна Ольăпа Наташа хĕрĕсене çупăрласа.

Пысăк çĕр-шыв пĕчĕк çĕр-шывран пуçланать. Пĕчĕк çĕр-шыва вара С. Кошкин пек мухтаканни вара сайра. Ялшăн та ĕçленĕ, кил-çурт таврашĕнче те юхăнма паман. Çавăнпа та вăл пурăннă çурт çинче асăну хăми уçма та ялта пурăнакансем йышлă хутшăнчĕç.

**А. БЕЛОВ.**

# Кăнтăрла та çутăпа

**Çĕнĕлĕх**

Ноябрĕн 20-мĕшĕнчен пе çул-йĕр хăрушсăрлăх правилисем вĕсене редакциленĕ хыççăнхи улшăнусемпе ĕçлеме тытăнчĕç. Вĕсемпе килĕшӳллĕн ятарлă «кăнтăрла çӳремелли çутă» халарăш пурнăçа кĕрет. Маларах машинăсен хула тулашĕнче «сывăхри çутăпа» çӳремелле пулнă пулсан халĕ правилăра «е кăнтăрла çӳремелли çутăпа» тени хушăнать. Анчах та хула тулашĕнче кăна мар, хуласенче те. Тепĕр майлă каласан яланах тата пур çĕрте те.

«Пăтăрмах» («препятствие») тесе çулпа кайма чаракан тапранмасăр ларакан объекта калаççĕ. Вăл ванчăк транспорт та, урăх япала та пулма пултарать. Анчах та правилăсемпе килĕшӳллĕн çул çинче чарăннă транспорт ун шутне кĕмест. Сăмахран, чарăну тĕлĕнче çынсене пушатакан автобус. Эсир ăна тăтăксăр («сплошная») чĕрнĕ йĕр урлă каçса иртсе кайрăр пулсан сире транспортпа çӳреме чараççĕ. Анчах та эсир çакнашкал чĕрнĕ икĕ йĕр урлă сулахай енпе кайса çул çинчи çĕмрĕк транспортран пăрăнса иртетĕр пулсан сире 1000-1500 тенкĕ чухлĕ çеç штраф параççĕ.

«Иртсе кайни» текен каларăша та урăхларах ăнланма тытăнмалла. Ку сăмахпа («обгон») халĕ малта пыракан транспорта хирĕç килекен машинăсен речĕ çине тухса иртсе кайнине палăртаççĕ. Апла пулсан эсир «иртсе кайма юрамасть» паллă пурри çинчех транспортран хирĕç килекен машинăсен речĕ çине тухмасăр иртрĕр пулсан ку правилăна пăсни шутланмасть. Анчах та çак паллă пур вырăнта транспорт конструкцийĕпе пăхса хунă тăрăх сехетре 30 çухрăмран ытла мар хăвăртлăхпа çӳреме пултараканнисенчен (мопед, колясксăр мотоцикл тата ытти те) çеç иртсе кайма юрать. Вĕсен çинче ятарлă паллă пулмалла – кĕтесĕсене «касса илнĕ» хĕрлĕрех сарă тĕслĕ виç кĕтеслĕх.

Тĕпĕр çĕнĕлĕх водительсене «çаврашкапа» каякан çул çинче кĕтет. Халĕ енчен те «çаврашка çул» паллăпа пĕрле çул пама хистекен паллă е «стоп» паллă пулсан та «çаврашкари» çулпа пыракансен ыттисем умĕнче право ытларах.

# Васкавлă пулăшу кам парать?

***Васкавлă пулăшу уйрăмĕсем октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çĕнĕлле ĕçлеме тытăннă тенĕ сăмах илтрĕм. Çĕнĕлĕхĕсем мĕнлисем-ши? Пирĕн районти васкавлă пулăшу уйрăмĕсем те çĕнĕлле ĕçлеççĕ-ши?***

**Н. АЛЕКСАНДРОВА.**

**Ку ыйту çине хурав шыраса эпир районти тĕп больницăн тĕп врачĕпе В.Г. ДАНИЛОВПА тĕл пултăмăр. Унăн хуравĕпе сире паллаштаратпăр:**

– Чăн та больницăсенчи васкавлă пулăшу уйрăмĕсем кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕнчепе çĕнĕлле майпа ĕçлесси çинчен пурте илтме пултарнă. Анчах та пациента васкавлă пулăшу бригади илсе килсен малтанхи вăхăтри пулăшăва та çак уйрăмрах парасси пирĕн пек больницăсенче ĕçе кĕмест. Çĕнĕлле ĕçлесси питĕ пысăк больницăсене çеç пырса тивет. Вĕсенче стационарлă сипленмелли 500 койка таран пулмалла. Тен Шупашкарта васкавлă медицина пулăшăвĕн больници çапла майпа ĕçлеме пуçлĕ те малашне. Хальлĕхе унта та ку ыйтупа ĕçлеççĕ кăна-ха.

Пирĕн районти васкавлă пулăшу уйрăмĕсем малтан çирĕплетнĕ йĕркенех пăхăнса ĕçлеççĕ. Çĕрлехи вăхăтра васкавлă пулăшу бригади чирлĕ çынна илсе килсен малаллахи сиплев мĕнле пулассине дежурнăй врач татса парать. Больницăра талăкĕпех хирург тата реаниматолог врач дежурстврă. Кăнтăрлахи вăхăтра вара больницăсенче пур тĕрлĕ специалист та вырăнтах. Васкавлă пулăшу бригади ача çуратма хатĕрленекен хĕрарăма илсе пырсан яланах гинеколог врача чĕнсе илетпĕр.

Муркашра васкавлă пулăшу уйрăмĕн икĕ бригади талăкĕпех ĕçлет. Кунта диспетчер, фельдшер тата водитель яланах сыхă. Мăн Сĕнтĕрте фельдшерпа водительтен тăракан пĕр бригада кашни талăкрах çула тухма хатĕр.

**Н. НИКОЛАЕВА ыйтса пĕлнĕ.**

**Спорт**

# Ĕçлекен çамрăксен пуçаруллă пулмалла

Ноябрĕн 26-мĕшĕнче «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче районти ĕçлекен çамрăксен 7-мĕш спартакиади иртет. Унта тĕрлĕ предприятисенче, организацисенче тата учрежденисенче ĕçлекен 18-35 çулхи çамрăксене йыхравлаççĕ. Йĕркелӳçĕсем тĕрлĕ ăмăрту пăхса хунă: сĕтел çи теннисĕ, ишесси (уйрăмшарăн тата эстафета), вĕрен турдасси тата волейбол.

Кусса çӳрекен кубок хальлĕхе районти шалти ĕçсен пайĕнчи çамрăксен командинче. Ăна çĕнсе илес текенсем йышлă пуласса шанас килет. Ăмăртăва виçĕ команда кăна хутшăнни районти предприятисемпе учрежденисенче, тĕрлĕ организацисенче ĕçлекенсене, уйрăмах вĕсен ертӳçисене чыс тумanни каламасăрах паллă. Активлă пуласчĕ!

**Объявления**

**ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ СОБРАНИЯ О СОГЛАСОВАНИИ МЕСТОПОЛОЖЕНИЯ ГРАНИЦЫ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Кадастровым инженером ООО «НПП «АРШИН», расположенным по адресу: 428022, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. 50 лет Октября, д. 19, адрес электронной почты ooo-arshin@mail.ru, контактный телефон 8(8352)57-06-51, в отношении земельных участков с кадастровыми номерами 21:17:030901:13 и 21:17:030901:14, расположенных по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, садоводческое товарищество «Автотранспортник-3», участки № 13 и № 14, выполняются кадастровые работы по уточнению местоположения границы и площади земельных участков.

Заказчиком кадастровых работ является: Жирнов Евгений Михайлович, проживающий по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Якимовская, д. 37.

Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования местоположения границ земельных участков состоится по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, выселок Васильевка, ул. Главная, д. 13 «24» декабря 2010 г. в 10-00 часов.

С проектом межевых планов земельных участков можно ознакомиться по адресу: 428022, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. 50 лет Октября, д. 19.

Возражения по проекту межевых планов и требования о проведении согласования местоположения границ земельных участков на местности принимаются с «24» ноября 2010 г. по «23» декабря 2010 г. по адресу: 428022, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. 50 лет Октября, д. 19.

Смежные земельные участки, с правообладателями которых требуется согласовать местоположение границы земельного участка с кадастровым номером 21:17:030901:13 земельные участки, находящиеся в Моргаушском районе Ильинском сельском поселении садоводческом товариществе «Автотранспортник-3» в кадастровом квартале 21:17:030901 и с кадастровыми номерами 21:17:030901:232, 21:17:030901:12.

Смежные земельные участки, с правообладателями которых требуется согласовать местоположение границы земельного участка с кадастровым номером 21:17:030901:14 земельные участки, находящиеся в Моргаушском районе Ильинском сельском поселении садоводческом товариществе «Автотранспортник-3» в кадастровом квартале 21:17:030901 и с кадастровыми номерами 21:17:030901:233, 21:17:030901:15.

При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документ, удостоверяющий личность, а также документы о правах на земельный участок.

* * *

Кадастровым инженером ООО «НПП «Инженер», адрес: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, ingenercheb@ya.ru, тел.: 28-06-06 выполняются кадастровые работы по выделу земельных участков в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из состава земель сельскохозяйственного назначения, расположенного в Чувашской Республике, Моргаушском районе, на территории СХПК им. Чкалова, поле № 2, западная часть кадастрового квартала 21:17:220701.

Заказчиками кадастровых работ являются: Петрова Людмила Димитриевна, Петров Николай Петрович, проживающие по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Соляной, ул. Е. Пугачева, д. 7.

Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования местоположения границ состоится по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Одаркино, ул. Центральная, д. 2, 24 декабря 2010 г. в 11 часов.

С проектом межевого плана земельного участка можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, офис 303.

Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельных участков на местности принимаются с 1 декабря 2010 г. по 16 декабря 2010 г. по адресу: 428022, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, офис 304.

Смежные земельные участки, с правообладателями которых требуется согласовать местоположение границы: участки, находящиеся в общей долевой собственности на территории СХПК им. Чкалова поле № 2, земли Чуманкасинского сельского поселения, 21:17:220701:624.

При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документ, удостоверяющий личность, а также документы о правах на земельный участок.

сохраним и преумножим ваши
СБЕРЕЖЕНИЯ
под достойные проценты
ЗАЙМЫ: на неотложные нужды "до ПОЛУЧКИ"
с использованием материнского капитала
новые более выгодные процентные ставки
узнайте больше:
с. Моргауши, ул. Чапаева 44а/2, тел. 6-23-10, 37-48-92
Кредитный потребительский КАПИТАЛ кооператив граждан
работаем с пайщиками

**Тав тăватпăр**

Юратнă мăшăра, аттене, пиччене, кукkана – Юнкăпуç ялĕнче пурăннă Андриян Захарович Яндушкина юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕн йывăр хуйхăна пирĕнпе пĕрле пайланăшăн тăвансене, юлташсене, кӳршĕсене, ялйыша чун-чĕререн тав тăватпăр.

**Яндушкинсен, Тихомировсен çемйисем.**

Больницăра сипленесси пурин те пулать. Çулсем кайнă майĕпе пире те, ватă çынсене, унта пĕрре мар пулса сипленме тиврĕ. Кăнтăрлахи стационарта ĕçлекен Манефа Андреевна Румянцевăна вара ăшă сăмахсем каласа тав тăвас килет. Чирлисемпе яланах ырă кăмăллă, вашават. 39-мĕш çул ĕçлет вăл Муркашри тĕп больницăра. Питĕ тимлĕ медицина сестри. Унăн çепĕç калаçăвĕпе тимлĕхĕ те эмел пекех сиплеççĕ. Тавах ăна çакăншăн. Сывлăхĕ çирĕп, пурнăçĕ телейлĕ пултăр унăн.

**Хорнуй ялĕнчен сипленме çӳренисем.**

1961 çулта çуралнă, Кашмашра пурăннă, ăратлă выльăх ĕрчетекен «Свобода» кооператив-заводра нумай çул хушши водительте, комсомол секретарĕнче, сысна фермин заведующийĕнче, автомеханикра ĕçленĕ юратнă ывăлăма, шăллăма, мăшăра, аттене, хуньстарике, асаттене, хисеплĕ юлташа Леонид Михайлович Чаплина юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн ăратлă выльăх ĕрчетекен «Свобода» кооператив-завод правленине, хуçалăх специалисчĕсене, Муркашри тĕп больница коллективне, кӳршĕри пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен инженерĕсене, тус-юлташĕсене, тăвансене, ял-йыша, пускилсене чун-чĕререн тав тăватпăр.

**Чаплинсен çемйи.**

* * *

Настоящим извещением уведомляем заинтересованных лиц, собственников участков, расположенных в СХПК им. Чапаева Чуманкасинского сельского поселения, д. Ягаткино по ул. Ф. Тимофеева Моргаушского района ЧР о проведении собрания по согласованию местоположения границ земельного участка 41,9 га, расположенного по адресу: ЧР, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Ягаткино, ул. Ф. Тимофеева, д. 42.

Заказчик работ, собственник земельного участка гр. Гордеев Вячеслав Кузьмич, проживающий по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Ягаткино, ул. Ф. Тимофеева, д. 42. Паспорт серии 9701 № 476985 выдан Московским РОВД г. Чебоксары Чувашской Республики.

Согласование местоположения границ состоится 24.12.2010 г. по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин» с 8 до 17 часов.

Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности необходимо направлять по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин».

КИРПИЧ
более 500 видов и цветов
Газосиликатные блоки
ОПТОВЫЕ ЦЕНЫ
ТК “ТЕРМИНАЛ”
г.Чебоксары, Канашское шоссе,7/1, тел.30-55-15
г. Новочебоксарск , ул. Промышленная, 41, тел.73-84-12

* * *

**Пĕрремĕш пăруламалли хура-шурă тынашки сутатпăр. Тел.: 8-917-664-14-39.**

Турайри вăтам шкул коллективĕ кунта акăлчан чĕлхине вĕрентекен И.М. Михайловăн шăллĕ
**Леонид Михайлович**
**ЧАПЛИН**
вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата сывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланнине пĕлтерет.

**Пĕлтерӳсем. Объявления**

**26 НОЯБРЯ**
**МОРГАУШСКИЙ РДК**
**с 9.00 до14.00 час.**
Сертифицированный сервисный Центр приглашает Вас на **ВЫСТАВКУ-ПРОДАЖУ КРАСНОГО ПАЛЬМОВОГО МАСЛА «ЗЛАТА ПАЛЬМА»**
Цена одной бутылки 1,1 л – 1850 руб., 250 мл – 740 руб., 125 мл – 930 руб.

**АЛИКОВСКИЙ РДК (детская библиотека) – 23 ноября, 2 декабря**



Также в продаже лечебно-косметические крема **«Универсальный» - 460 руб; «Черное золото» - 260 руб.** (при суставных и мышечных болях – артрит, ревматизм, остеохондроз, ушибы, гематомы, синяки, отеки, растяжения мышц и связок и т.п.).

**26 ноября с 8-00 до 16-00 часов Ульяновская обувная фабрика проводит выставку-продажу обуви из натуральной кожи Ульяновской, Беларусской фабрик и других российских производителей. 2-5.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 2-10.**

* * *

**Ĕне, вăкăр, пăру туянатăп.**
**Тел.: 60-7-10, 8-905-343-60-63. 3-5.**

* * *

**Услуги сантехника: демонтаж и монтаж систем водоснабжения и отопления из металлопластика и полипропиленовых труб, системы канализации.**
**Тел.: 8-953-012-67-02. 1-2.**

* * *

**Стройматериалы с доставкой: кирпич керамический, одинарный, полуторный, двойной; кирпич силикатный любых цветов; блоки керамзитобетонные, газосиликатные; пеноблоки, фундаментные блоки; кольца колодезные, трубы асбестоцементные, цемент, шифер, профнастил, металлочерепица и другие стройматериалы. Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-88-00-483. 7-9.**

* * *

**Сварочные работы: ворота гаражные, калитки, ворота приусадебные, палисадники из металла, профнастила, печи банные продаем и изготовим на заказ.**
**Тел.: 38-51-75, 8-927-66-85-175. 7-9.**

* * *

**Сайдинг, цокольный сайдинг, расчет материала, доставка. Гипсокартон, фанера, панели ПВХ и МДФ. Сухие смеси, утеплители, эковата, изоляция, пластиковые окна, электроинструменты, краски. Тел.: 629-58, 8-937-377-76-78. Отличные цены. 2-2.**

* * *

**Лицензированный охранник с водительским удостоверением (категории В, С, Д, Е, стаж 28 лет) ищет работу.**
**Тел.: 8-909-302-45-02, 62-3-76 (домашний).**

* * *

**В объявлении собственника земельной доли Багрова Елена Ивановна, о выделении земельного участка в счет земельной доли, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, опубликованного в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 30 октября 2010 года в № 92 (7834), допущена опечатка. Вместо «в центральной части кадастрового квартала 21:17:092701» следует читать «в северо-западной части кадастрвого квартала 21:17:101601».**

* * *

**Хура-шурă тĕслĕ тынашки сутатăп, июнĕн 20-мĕшĕнче пăруламалла. Тел.: 8-917-660-73-37.**

Райхаçат редакцийĕ хаçатпа çыхăну тытнă
**Николай Якимович**
**ВАСИЛЬЕВ**
вăрçăпа ĕç ветеранĕ тата
**Аркадий Антипович**
**КАЛИНИН**
ĕç ветеранĕ вилсе кайнă пирки вĕсен тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

СПК «Восток» скорбит в связи с тяжелой утратой – кончиной бывшего работника кооператива, заслуженного работника сельского хозяйства, агронома
**КАЛИНИНА**
**Аркадия Антиповича**
и выражает глубокое соболезнование родным и близким покойного.

СПК «Восток» скорбит в связи с тяжелой утратой – кончиной бывшего работника кооператива, участника ВОВ
**ВАСИЛЬЕВА**
**Николая Якимовича**
и выражает глубокое соболезнование родным и близким покойного.

«Муркашри сĕт завочĕн» коллективĕ кунта генеральнăй директор пулса ĕçленĕ В.А. Калининăн ашшĕ
**Аркадий Антипович**
**КАЛИНИН**
вилсе кайнă пирки чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

«Передовик» хуçалăх правленийĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕн В.А. Калининăн ашшĕ
**Аркадий Антипович**
**КАЛИНИН**
вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата унăн тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Коллектив МДОУ «Детский сад № 3 «Солнышко» выражает соболезнование воспитателю Смирновой Т.П. в связи с тяжелой утратой – смертью
**ОТЦА.**

«Свобода» СПК-племзавод правленийĕ
**Леонид Михайлович**
**ЧАПЛИН**
нумай вăхăт хушши чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки унăн сывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, явапла секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкрахисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем явапла.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Белов А.П.
Пичете панă 23.11.2010 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4055.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.